Пĕтĕм тĕнђери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

# КАПКĂН

14-мĕш № ИЙУЛШĔН. 1928-мĕшĕ.

— 4-мĕш çул тухать. —

## Кумасен ĕмĕрĕ.




— Епĕ прикашђĕке кĕрес, тетĕп. — Прикашђăк пулма метр виçисемпе паллашма кирлĕ... — Апла пулассине сиссех килтĕм. Паллашмасăр кирек ăçта кĕме хĕн ĕнтĕ хаљ...

# Курорт.

(Пӗђӗк ҫынӑн телейӗ).

— Ак, сана укҫа, ак токумент... Пайанах вупӑл йевӗрлӗ ырхан арӑмупа, ҫырмари шапасем пек ҫухӑракан ађупӑђусемпе прощђатсӑ туса тух та, тӑвалла кайакан прахутпа Мускав виттӗр Крыма вӗҫтер, терӗ мана хамӑрӑн ҫекреттар пӗр ирҫинђе слушпа пырсан.

Епӗ ӗненмесӗр сӑмсана кӑранташ вӗҫӗпе ҫӑтӑр-ҫатӑр ђакалтаса илтӗм те:

— Невушлӗ курорта йараттӑр вара мана... Ак телей!.. Курорт, курорт... тайош, кӑнтӑр хӗвел ӑшши, тесе кӑшкӑрса йатӑм ђӑтаймасӑр.

— Ӗненместӗн пулсан, ак пуҫлӑх ресоԓутсине вуласа пӑх, терӗ мана хирӗҫ савнӑ ҫекреттар. Савӑннипе ҫекреттара хӑлхи кутӗнђен йапӑлт-йапӑлт ђуп туса илтӗм те, уђрештенирен проплӑ пек тухса вӗҫкӗнтӗм.

Курорт, курорт... тӗлӗкре курман йапала!.. Ӗлӗк унта мӑн хырӑмсем пурӑннӑ, халӗ епӗр—рекистраттӑрсем те кайатпӑр!..

Киле пырса арӑмӑн шуҫпа тыттарса пӗтерне арђи ӑшне ҫул ҫинђе кирлӗ пек йапаласем тултартӑм та, ҫав кунах прахутпа Ђулхулана шаплаттартӑм.

— Ех, тӑван Атӑл, мӗнле есӗ ҫав таран илемлӗ пулма пӗлнӗ!.. Кам ўстернӗ сан таврари кӑтра вӑрмана... Санӑн канлӗ йухакан хумусем, умра ларакан хӑмӑр куҫлӑ сарӑ хӗр хулпуҫҫи урлӑ курӑнсан, есӗ пушшех илемлӗ...

Ун пек хӗр халӗ ђӑнах та ман умрах ларай. Вӑл хӑйне „Фейа" тесе ђӗнме хушай. Епӗ унпа Шупашкартан ларса тухсанах паллашрӑм. Вӑл Хусанти токтӑр хӗрӗ... епӗр унпа Крыма ҫитиђђенех пӗрле кайатпӑр...

Ђулхула. Кунта тытӑнса тӑрса—тулккӑ ҫук... Тусан ђух тусан айне пулнӑ, пыђђӑк ђух пылђӑк ҫине путнӑ Шупашкартан нумайах малта тӑмасӑ вӑл Ђулхула. Ҫавӑнпа прахут ҫинђен анса тўрех пойӑспа Мускава вӗҫтертӗмӗр.

Епӗ Мускавра, 1920-мӗш ҫулта Хӗрлӗ ҫарта пурӑннӑранпа, пулман. Пит ђапланса кайнӑ мӗн ку хула... Ӑҫта пӑхнӑ унта сатсем. Сатсенђе улмисемпе шӑрҫаланнӑ улма йӑвӑҫҫисем тулийах. Улма йӑвӑҫҫисем хушшинђе 10—12 хутлӑ ӗрешлӗ ҫуртсем каҫҫӑр пуҫӗсемпе мухтанса лараҫҫӗ. Епӗр Фейӑпа Тверской урамра нумӗрте пурнатпӑр...

Анђах ҫитет кунта икӗ кун пурӑннипе... Ђасрах кайас кӑнтӑр хӗвел ӑшшипе Шупашкарта хӑрнӑ шӑмшака ҫемҫетме.

Акӑ вӑл ђаплӑ Крым!.. Акӑ, етем пуҫне ўсертекен Хура тинӗсӗн кӑвак хумӗсем... Темиҫе ҫӗр ҫухрӑмран йӑванса килсе, хӑйӑрлӑ сӗвек ҫыран ҫумне ҫапӑннӑ ђух, вӗсем пайан манпа сӑмахлаҫҫӗ. Епӗр Фейӑпа хӑйӑр ҫинђе телей ӗҫсе выртатпӑр. Фейӑн сасси, хамӑр йал умӗнђе ҫырмари тӑрӑ ҫӑлкуҫ пек, шӑнкӑртатай. Ах, кам ђӗри савӑнмасӑр ђӑтӗши Фейӑ пек илемлӗ хӗрпе йунашар тинӗс хӗринђе выртнӑ ђух...

Ҫакнашкал тӗлӗкре курман телейе ӗҫсе выртнӑ ђух, Фейӑ ҫумӗнђех епӗ кӑшт тӗлӗрсе кайнӑ...

Те нумай ҫӑварнӑ, те сахал—ӑна пӗлместӗп, анђах кӗҫ шӑнкӑртатакан ҫӑлкуҫ кӗввине тикӗт сӗрмен урапа сасси ҫӗнтерсе илђе... хӑлхасем йӑнӑш илтеҫҫӗ, пулӗ тесе, виҫӗ-тӑватӑ минут куҫа уҫмасӑр выртрӑм...

Виҫ-тӑват минутран:

— Тӑрсам ђасрах, мӑйӑх хутаҫҫи, вун сехет те ҫитет пулӗ пайан, терӗ такам сасси.

Куҫсем хӑйсемех уҫӑлса карӗҫ. Ҫӑвар та ҫӑмарта хыпма хатӗрленнӗ пек пулса карӗ... Карау-ул!.. Пӗтрӗм...

...Ман ҫумра кашни кунхи вупӑл йевӗрлӗ ырхан арӑм тӑрай. Пуҫ вӗҫӗнђе ађасем ҫуйӑхаҫҫӗ... Вӗҫи-хӗррисӗр тинӗс вырӑнне хӑнкла шӑрши кӗрекен тӑвӑр пўлӗм...

Ех... ӑҫта ман курорт, ӑҫта ман Фейӑ? Ма епӗ рекистраттӑр анђах пулнӑши? РОНИ.

# Пулӑллӑ кӳлӗ.



— Хысна туса панӑ кӳлӗре пулӑ пит нумай. Алпах тытмала!
— Мӗнле йышши? — Иытӑ пулли.

# Пуҫа кӗнӗ шухӑшсем.

Йалсоветра ӗҫлекенсем унта-кунта ҫӳресе ӗҫлес вӑхӑта ан иртерҗӗр тесен, йалсовет кӗнҗелерине хупаха куҫармалла.

---

Килес ҫул ҫӗнӗрен копператтивсем җылай уҫӑлмалла пек, мӗншӗн тесен Шупашкар тӗрмине йусама тытӑннӑ.

---

Пулӑшком претҫетаттӗлне кӗнӗ ҫынна сӑмсаран пӗлме пулаӗ. Сӑмси шӑтӑкӗсем унӑн аслӑ пулаҫҫӗ (ӗҫсӗр аптӑранипе җаваласа ларнӑ пирки).

---

5 копператтивран пӗр копператтив претҫетаттӗлӗ пуспа шухӑшлаканни пулаӗ, тӑваттӑшӗ—атӑ кӗлипе шухӑшлаканнисем.

---

Копператтив претҫетаттӗлӗн пуҫӗ пушӑ пулсан, копператтив лавккинҗи ҫӳлӗксем те пушӑ пулаҫҫӗ.

---

Шефа ӑна ҫак майпа пӗлме пулаӗ: сӑмахпа вӑл арӑслан, ӗҫӗпе нӑйлатса хӑлхана йӳҫӗхтерекен шӑна. Ҫухалнӑ шефа ҫав приметтӑсемпе тупма пулаӗ кирек хӑҫан та...

---

Ҫапӑнса тухнӑ хаҫат номӗрне пӗрик кун хушши анҗах вулаҫҫӗ, ҫтена хаҫаҗӗн пӗр номӗрне 6—7 уйӑх хушши вулаҫҫӗ.

---

Кромкоковориттӗлсем хӑш-хӑш йалта, пӗре мар, виҫҫӗ те пур—пупӗ, тийеҗукӗ, тата мӑн ҫӑварлӑ тийаккӑнӗ.

# Мами совхосĕнҫи трактăр машшинисне.

**(Уçă çыру)**

*Ҫовккă йулташ!*

Иалта йатлă иккен есĕ. Тав тума та тивĕç курăнаť. „Капкăн“ йаҫĕпех тав тăвас пулĕ.

Анҫах, вăл ку пулĕ—нимрен малтан сана пĕр лайăх хыпар пĕлтерес килетха манăн.

Халăх вăрçă çине мĕнле пăхнине, тăшмансене хирĕç тăма хатĕррине сăнасшăн çунаттăмăр епĕр халĕ, пĕр маттур тупăнҫĕ те...

„Войенисатси, халăх сыхлăхĕ—сехре хăппи“ тенисене уç тупанĕ çинех илсе кăтартаканĕ кун пекки тĕнҫипе те урăх çук пулĕ. Çĕнĕ хыпар. Вуласа тухха йурийех.—„Илтекенпе куракан“ мĕн калаççĕ.

Ҫăнахах та маттур вара,—каламалли те çук. Акă, итлеха:

Сĕлескер йалĕ (Çĕрпӳ районĕ). Çу уйăхĕн 12-мĕшĕ. Çĕрле 11 сехет тĕлли. Иал тутлă ыйăха туртаť. Лăпкă... Сасартăк:

— Т-тăр-тр-тăрı! Тунт-тунт-тунт! Шăри-шари çухăрса йаҫĕç. Иал пусĕнҫе ту йенҫе темĕн çĕмĕрлме пусларĕ.

— Вăрçă килет!..

Сехре хăпрĕ тухрĕ. Тревокă. Çара пусăн, çара уран... Ыйăх тĕлĕшпе унталла та кунталла...

Хăшĕсем урамалла çухăрса тухаççĕ, хăшĕсем ҫасрах пытанма, алăксене питĕрме...



Петĕрккепе тахшин улăхрĕç кайрĕç пӳрт тăрне. Пăхаççĕ:

— Уй хапхи патĕнҫе пăшаллă çынсем иртсе кайрĕç. Иккĕн...

— Салтаксем... Катара йал çунаť. Тĕтĕм те пур.

Тура каллех шăтăр-шатăр! хăнт-хант! Шат-шат. Тов! тунă сасăсем! Хытăран хытă илтĕнекен пулса пыраť.

— Вăрçах килет!

Петĕркке тӳрех пӳрт тăрĕнҫен сике паҫĕ.

— Пирĕн йала вут тĕртме килеççĕ... Анне!..

Пӳртре хăшĕ сак айĕнҫе, хăшĕ кăмака хыçĕнҫе пашкаса выртаççĕ. Петĕркке амăшĕ çиççе тухрĕ те, арман çунаттийĕпе пĕрех, хĕрес хурса çаврăнаť.

— Васпути! Пĕтрĕмĕр!... Нимĕн тума пĕлменнипе кăмака сакки çинҫи ҫӳлмексене илҫĕ те, кăмака анинелле йара паҫĕ...

———

Сехре хăппи. Уй хапхинҫен пысăк шатрака урапаллăскер тунт-тунт-тунт!.. тутарса кĕҫĕ. Урапи ҫинҫе пĕр ҫын ларать. Хыҫра ĕмĕлкесем...

— Салтаксем пулĕ хыҫрисем..

— Тупă тийесе килеҫҫĕ... Татах та хăрушă. Халиҫҫен курман кун пек урапа. Акă вăл анат кĕтеселле хĕмсĕртетсе анса кайрĕ.

— Тавах турра! Кайать... Шатах ҫўреҫесенҫен пăха пуҫларĕҫ, матуртараххисем хапха алăкĕнҫен те пуҫсене кăтарткалаҫҫĕ.

Анҫах, урапа калла таврăнҫĕ. Пĕрре ку кĕтесе ҫитсе тăрăнать те, мĕкĕрсе калла ҫакаланать.

— Вăш-вăш-ш! тутарса пăс кăларать, татах шат-шат! туса ҫурăлать. Тем „есремеҫĕ" тултарнăҫке шала?

Ҫурҫĕрҫҫен ҫĕмĕртгерсе ҫўренĕ хыҫҫăн „есремет" урапи пĕр ҫурт умне пырса ҫарăнҫĕ. Ларса пыраканĕ ўсĕр. Анҫĕ. Авкаланать кăна.

— Пăртак сыпасҫĕ! Лешĕ пури? Вĕрирехххи?..

— Пур-пур!.. Ўсĕрскерне пўрте илсе кĕртсе сыптаркаларĕҫ. Ҫынни славни, курăнать, кăмăллă:

— Ҫăварни ҫупас килети, ей?! Ман тимĕр лаша пур. Пĕрре темонстратси туса кăтартам. Епĕ — Ђовккă, Мами трактăрҫĕ, Ҫĕрпўрен таврăнатăп. Пирĕн трактăр катаҫҫи ҫупма та йатнех...

——

Ĕҫекенсенҫен пĕр 10 — 12-ĕшне трактăр ҫине хăпартса лартрĕ те, ех!.. тул ҫутăлаҫҫенех катаҫҫи ҫуптарса, халтăртаттарса ҫўрерĕ.

Хăш-пĕр инкесем йалта тул ҫутăлсан тин сакайсенҫен тухнă.

— Ђун йулмарĕ, теҫҫĕ. Хăш та хăш сывлаҫҫĕ.

Уй хапхи патĕнҫи пăшаллăскерсем— йалти ухутнĕксем пулнă.

— Салтаках тесе...

——

Ҫапла кăсал Сĕлескер сехре хăптарса курҫĕ. Хăй пелăйсемпе вăрҫма йепле хатĕррине кăтартрĕ.

Пĕр йенҫен мыскаралла, тепĕр йенҫен...

Ну, мĕнле, Ђовккă машшинис, есĕ пуҫ ҫав мыскара патши?! Пăртак ҫырса пĕлтермĕнши мыскарусем ҫинҫен— лайăхрах пĕлесҫĕ.

Темонстратси тăватăн еппин! Халăха трактăрпа паллаштарни аван та ĕнтĕ. Анҫах есĕ унта йерипентерех хăтланкалаха.

Атту, Сĕлескер, Хыркасси тăрăх вĕри пăссем кăларса, шартлаттаркаласа ҫуресе, есĕ йалта пĕр ҫўлмек йулмиҫҫен ваттарса пĕтерĕн тата, „вĕрирехисене" сыпкаласа, хăвăн пуҫна та трактăру мĕнĕпех пĕр-пĕр ҫырана кайса ҫикетĕнха.

Асту! Кунта та йанăрать, халĕ те, хăлхараха есĕ унта кĕмсĕртеттерсе ҫўрени!

Иерипертерех ҫупкала!

„Капкăн" машшинисĕ
ЙАПКĂ МИККЕРĔ.

## Камшăн каламаллине Кириллăв хăй пĕлет.

„Вăрмар районĕнҫи политҫуткомпретҫетаттĕлĕ Кириллăв й-ш Ђăваш автономи кунĕ вилсессĕн те ҫăвашла каласшăн пулмарĕ,‘.
„Ђăвашкор" сăмахĕ.

Кириллăв й-ш. (трипунă ҫинҫе сулкаланса):.. вистории ҫеловеҫества натсионаљнăй вопрос санимало первостепеннăй местă...

Арапуҫ хресҫенĕ: — Мĕн мести вăл, мĕн?..

Кириллăв:... в нашшă стана расрешшайĕт правĕлнă. Осначеновани 8-й котовшҫин Ђувашавтомиттĕнк опйављайу открыттым...

Хресҫен сасси: Маха ҫăваш праҫниксенҫе те, йал ҫăвашсемпе те ҫăвашсемех ҫăвашла калаҫмаҫҫĕ.

— Кириллăвĕ: Иа сам хорошо снайу камшăн каламаллине, пĕлетпĕр... тесе ҫухăрса йаҫĕ.

Иалтан пухăннисенҫен 100 пайĕнҫен 90 пайĕ Кириллăв тем каланине тăнланаймаҫҫĕ. Вăл урăххисемшĕн калать иккен. Унта стантсăран 5—6 майра, вырăс мешҫен хĕрĕ миттĕнка пырса тăнă мĕн. Вĕсем Кириллăвшăн пулсассăн пĕтĕм ҫăваш ĕҫхалăхĕнҫен те хаклăҫке. Ҫавăнпа Кириллăв ҫав хĕрсем тăнланаймасран хăраса вырăсла каларĕ.

Пĕлет мĕн хăйех камшăн каламаллине, тата сăмах туса тăракансем тупăннă. Ек-кă-йа.

У.

# Акроном, ун помошнĕкĕ, тата пĕр путылккă çутти.

(Кино стсенари).

## Пролоксăр, виçĕ пайлă, инттереслă еппилăкпа.

### I-мĕш пайĕ.

Çĕрле. (Тĕттĕм çĕр пулмалла). Акроном хваттерĕ. Хĕрлĕ Ђутай районĕнђи акрономпа помошнĕкĕ майпен мăшăлтатса, хушшинђен йăх-йăх-йăх кулса ларaççĕ.

Хĕрлĕ пуçлă путтылккăра çутти. (Решиççор, çак путтылккăна лайăхрах кăтартăр: кунта мĕн пур вăй). Шăп!

### II-мĕш пайĕ.

Ĕççĕр аптăрană „кăвакал“ акроном шухăшла помошнĕкĕ сĕтел çинђи шăнасене шутласа ларaй̆.

**Акроном:** (Сиксе тăрай̆ те)—айта, карăмăр. Çинтикатсийне илсе килер.

**Помошнĕкĕ:** Рат страй̆сă!..

Стсенă çинђе ерех макаçăнĕ курăнай̆. Акрономсем урам тăрăх пынă ђухне хуçасăр. Суланса çӳрекен йытăсем шартах сиксе ӳкеççĕ те, айаккинелле пăрăнаççĕ.

### III-мĕш пайĕ.

Сĕтел çинђе çуттин ($40^0$) путылккисем. Пĕр путылккине сăмах хушмасăрах йалклаттарса йараççĕ.

**Акроном:** Айта пропкка çапса кăкăлармалла выђатпăр.

**Помошнĕкĕ:** Рат старатсă!.,

**Акроном:** Ну, пирвай есĕ пер! Помошнĕкĕ кĕленђе пуçне çапай̆ те, кĕленђи ђанк! туса ванса кайай̆. Акрономĕ помошнĕкне çавăншăн сăмсаран та, пуçран та, айалахран та ватса пĕтерет.

### Еппилăк.

Иулташ решиççор, акрономсене ђарăнма ыйтма йурати?

— Çук!

— Мĕншĕн çук? Вĕсем кашни кун ӳсĕр пулсан, унтан мухмăрçке, çапăçни, тата . . .

— Есĕ ан шарла, вĕсем хăйсемех пĕлеççĕ. Райĕçтăвкомпа Райкома пырсан:—Ето наше лиђное тело, тейеççĕ. Ирĕксĕрех шарлăн . . . .

Стсенар ăсти Нăри.

---

## Шăна вăхăтĕнђе.



Пӳрократ:—Шăнасене çыртма ђармалли постановлени кăлармалла пулай̆.

---

## Тĕрлĕ çынăн тĕрлĕ шухăшсем.

Мĕншĕн хресђенсем тырра çурлапа анђах выраççĕ, мăлатукпа та вырмаççĕ, тенĕ шеф йала пырсан.

---

Шăпђăк, есĕ лайăх йурлатăн та, анђах пирĕн токлатђĕке çитес çук, тенĕ пренире тухса калама вăтаннă çын хăй килĕ йенелле утса.

---

Куљттура револютсийĕ тăватпăр, çил арман çунаттисем халĕ те хĕрес майлах, тенĕ пĕр комсомолĕс ђиркӳ ђанĕ саессипе кайса.

# „Капкăн“ архивĕ.

## „Хресҫен хĕрне—Ҫеркей Иаккуне“.

Ианкăлҫ йалĕҫтăвкомне (Канаш р.) ҫакăн пек ĕнентерӳ пырса кĕнĕ:

*Ĕнентерӳ.*

Вăтакас йалĕҫтăвкомĕнҫи панă Канаш районĕнҫи Вăтакас Татмăш хресҫен хĕрне Куҫма Аннине ҫăн, хăй ирĕкĕпе Ианкăлҫ йалĕнҫи Ҫеркей Иакурне.

Ҫавăнпа пиҫет хурса алă пусатпăр.

Претҫетаттĕл: *П. Михаилов.*

Ҫыруҫишĕн: *А. Захаров.*

Ҫак хут ҫине ал пуснă ҫухне Миххайлăвпа Саххарăвăн пуҫĕсем арҫара пулнă.

## Иалĕҫтăвкома кам тытса кăтартма пултарать.

Ак тата тепĕр ĕнентерӳ урăхларах (Вăрнар районĕнҫи Еришпуҫ йалсоветĕ парать ăна):

Пред'явитель сего СИК-а дер. Кюстемер Митрофан Михайлов что и утостоверится с подписью и прилошением печати

Пред СИК-а *Одинцов*

Секретар *Тихонов.*

Ҫăвашла куҫарса хăтлансан ку хут ҫапла пулать: „ҫак йалĕҫтăвкома кăтартакан Кӳстимĕр йалĕ...

Ку ĕнентерӳве пиплиотĕкка кĕнеке илме кайма панă. Апла пулсан ăна ҫăвашла та ҫырма йурамă. Ма ҫырман? „Капкăнра“ хăйсене-хăйсем курасшăн ҫырман.

## Паха ресоҫутси.

Ваҫли Пискалккин Шĕмшеш (Елĕк р-нĕ) йалĕҫтăвкомне ҫапла сайавлени панă:

„Ҫулла выҫăх рекистратси вĕремĕнҫе пирĕн ĕне пур ҫҫĕ, ҫулла советран утостоверени илсе сутрăмăр халĕ пире 2 ĕнешĕн килҫĕ тӳлемелли страхховой, ҫавăнла та ыйтатпăр пĕр ĕнешĕн тӳлес мар тесе“...

Ҫав ĕне страхховкки ҫинҫен ҫырнă ыйту ҫине йалĕҫтăвком ҫыруҫи ҫапла ресоҫутси хунă:

„Через сведению представлен в райземкомиссию четыре (4) куб. сажени“.

## Хăрушă хут.

Пĕри ĕлĕк йапăх ҫын, шыва кĕме кайсан, кĕпипе йĕмне шыв хĕрине хăварнă, тет те, киле кĕпе-йĕмсĕрех таврăннă тет. Пулать вăл ун пеккки.

Совторкслушăшҫисен Ҫăваш пайĕ 66/100 номĕрпа ҫапла хут йарать.

*Чувашпайторг.*

Чувашотдел ССТС просит прибыть в союз для выяснения некоторых вопросов.—

За председателя отдела *Громилова.*

За секретаря *Жуков.*

Ҫăвашпайторк вăл уҫрештени. Вăл Хĕрлĕ прошҫĕтри ҫул ҫуртра вырнаҫнă. Претприйаттисем те пур унăн, слушăшҫисем те нумай. Мĕнле пырĕха вăл пĕтĕм слушăшҫисемпе, ҫурҫĕсемпе, тата пур претприйаттийĕсемпе Сойус кĕнҫелерне?

## „Укҫасăр пасар хакĕ“.

Ҫак пĕлтерӳве Нурăсри кивҫенлĕх йул-лăхĕ кашни йалах салатнă. Хурăн-Кăкшăмра та вăл 2 сĕрте ҫакăнса тăрать. Кам ăна ғăнланас тесе вулать, ҫавăн ҫавăнтах пуҫĕ хыҫалла ҫаврăнса ларать.

„Кре—товарищ агентсене кам шур кипке ҫĕтĕкки 20 кĕренкке ҫитерсе парать, ҫав ҫынни лотори илет. Ҫав лотори Ух тĕрлĕрен йапала укҫасăр снаш ҫĕтĕк кипкине пасар хакпе укҫа тӳлеҫҫĕ нумай Нурăс пасарĕнҫе Нурăсри кредитно-товарищ ĕҫлет. Косторк ĕҫлет“.

Ҫакна ҫыраканнин пуҫĕ ҫакна ҫырнă вăхăтра канмалли ҫуртра канса выртнă.

## Иал хуралҫисем.

— Пирĕн йалта ҫеретлĕ хурал аван тăраҫҫĕ.

— Пушар тухсан халăхсене пушара кайма вăхăтрах систереҫҫĕ еппин,

— Ҫук, кĕлетсем ҫумне выртса ҫывăраҫҫĕ те, ҫăпатисене салтса кайсан, тепĕр кунне йал тăрăх шыраса ҫӳреҫҫĕ.

Крахвин.

Кашни тухас килмесренех тухса пыракан

# „КАПКĂН ХАÇАТĔ“

Х А К Ĕ: „Капкăн“ шурнал потписђĕкĕ маррисемшĕн 5 пус, потписђĕксемшĕн—0 пус, çын çырăнса илнине вулакансемшĕн 1 тенкĕ, Ђемперленшĕк 100 тенкĕ—(хут пĕлменнисене сутмастпăр),

ПАЙАНХИ НУМĔРТЕ:



„Капкăн“ хаçађĕпе супăнђ ђăркама йурамасť.

## РАТИО-ХЫПАРСЕМ.

### Суйлав иртни.

**Вăрăмкас.** Йалти копператтивра суйлавсем пулса иртнĕ. Копператтив укçисене анђах мар, хăш-пĕр таварĕсене те суйласа илсе кайнă... вăрăсем.

### Самооплошени укçи тŷллерĕç.

**Шăхасан.** Алăсти ĕçĕпе тăранса пурăнакансем тăрăшнипе самооплошени камппани аван иртнĕ. Платниксем икшер тенкĕ çурăшар самооплошени туса вуннăн виçĕ ђетвĕрт ерех ĕçнĕ. Ытлашши укçипе шушкă илнĕ.

### Лаpакансем нумай.

**Нурăс.** Нурăс пасарĕнђи пасарнĕк, милитси хурмине тăхăнса пăшал сакса йарса, ... ytрештени пуçлăхĕсен пуçĕнђе. Çанталăка сăнакансем каланă тăрăх, вăл çавра çил самокриттĕк йатлă çилтен пулса кайнă.

### Шупашкар пасарĕ куçаť.

**Шупашкар.** Шупашкар пасарне урăх çĕре куçарасси çинђен хула совеђĕ темиçе хут постановлени йышăнни харама каймарĕ—пасар урăх çĕре куçма пуçларĕ. Кăнтăрла иртни 3 сехет иртсен, кашни тунтикунпа ернекунсемех пасар... хулари пивнойсене куçса лараť.

### Сăмакун тунăшăн... преми илнĕ.

**Çав йал.** Йĕпе Пракух сăмаконкка тунăшăн преми илнĕ. Сăмоконкка туса лаççипе сарайне ...

## ТЕАТĂРПА ИСКУССТВĂ.

Çуллахи (Атăл хĕрринђи) Пулђварти театăрта. „Утса çŷрени“ йатлă пйесса кашни кунах вырăсла выђаççĕ. Лартасса ăна çĕнĕ майпа лартаççĕ решиççорĕсем—пĕтĕм халăх выђаť унта. Кураканнисем, ларас вырăнне, кал лĕ-маллĕ утса çŷреççĕ.

Рапођисен клупĕнђе. Кашни кунах çĕнĕ пйесă—„Пиллиарт“ лартаççĕ. Артисĕсем, шалу илес вырăнне, хăйсенђен укçа туллеççĕ.

Ђăваш Тĕп Театăрĕнђе. Артиссем „Натси ыйтăвĕ“ йатлă пйес-



## ĂС ПАНИ.

Утик-касси С. В. Нумай пулмасť епĕ хаçатра çакăн çинђен вуларăм:

„Ђăваш респуплĕкĕнђех (ытти кĕпĕрнесемпе оплăçсене шугламасăр) пĕтĕмпе пĕлтĕр 58.223 ађа вĕреннĕ“.

Тепĕр кĕнекере (Тĕпистат кăларнă „Ĕç кĕнеки“ йатлă хрестоматтире) çакăн пек çырнине тĕл пултăм тата.

„Шăпђăк ирпе тăрсассăн,
Ђăвашсене курсассăн,
Каçсах кайаť куласшăн—
Тĕр-тĕк! Тĕр-тĕк! Тĕр-тĕк! тет“.

Калăрха мана, тархасшăн, çав 58.223 ађаран хăш ађа вађђи кĕртнĕши ретактăрсем çак сăвва?

**Хирĕç калани.** Вăл кĕнекен ретактăрĕсем тăваттăн—А. Антонăв, К. Сорин, М. Иефимăв, тата П. Иурккĕн. Çав ретактăрсем ĕнтĕ малтанхи 3 строккине 58.223

кĕ вырăн укçи илсе лартса çуренĕ. Лартнă çынсем халĕ килтех пурăнаççĕха.

### Çавра çил.

**Район ђенттăрĕсенђен, тата Шупăшкартан.** Кăçал çулла çавра çил ђылай палăрма пуçларĕ пана (лаççипе сарайĕшен).

### Çурт-йĕр тăвас вăхăт.

**№ Хула.** Хула совеђĕ çак çурт-йĕр тăвас вăхăтра (çесон) пушар каланђђи, тата 2 шăнкăрђ йăви тутарнă. Отђот тăрăх, кăçал çуртйĕр тăвас вăхăт аван иртнĕ.

### Усăллă саççетани.

са выђаса парасшăн, атминистратси „Майра инке револђутсийĕ" йатлă пйесса выђама хушаќ. Артиссемпе атминистратси хушшинђи тавлашу пирки, третейски сут Опкомпа Ђăваштĕпĕçтăвкомĕнђе пулмалла. Вăхăтлăха халĕ, артиссем вырăнне, Ђăваш Тĕп театăрĕнђе йĕке-хӳресем, шăшисем, тата патмар ерешменсем çпектаккăлђсем ларткалаççĕ (еçперантто ђĕлхипе).

**Рапрос клупĕнђе.** Контсерт. Контсерта йертсе пыракансем—кăмака шăрђăкĕсем. Контсерт умĕн лартмалли çпектаккăлђ йатне афишă çинђе „Заочные курсы в Москве" тенĕ те, анђах апла мар—„Рапрос клупĕн канмалли кунĕсем" темелле.

## Науккăпа техникă.

### Ђыђăх ђапа йуратати?

Хађхи вĕреннĕ çынсем сăнаса пăхнă тăрăх, выђăх тени ахађ çынсенђен те ытларах ђапшăн çунаќ.



Ак кунта çиленнĕ сысна сăнне кĕртетпĕр.

Мĕншĕн çиленнĕха вăл? Акă мĕншĕн: çав картăђка вăл «Сунтал» шурналăн 1-мĕш страницси çине кĕртессе ĕмĕтленнĕ. Пысăк картăђкă туса кĕртес вырăнне, ретакси ăна çак хаçат çине пĕђĕклетсе кĕртрĕ. Çавăншăн ĕнтĕ çиленнĕ вăл. Ав, пăхăрха хытăрах картăђки çине—„сторовă" та тăвасшăн мар пирĕнпе.

---

**Паха краштанин**

**Тавар Хакне Йӳнетес(сăв) вилђĕ.**

Вăхăтсăр вилнĕ хаклă йулташа пытарма пĕлĕшсене те, пĕлĕш маррисене те, ђĕнетпĕр.

Ӳтне копператтив çуртĕнђен 12 сехетре йăтса тухаççĕ.

Вилĕ тăпру çăмăл пултăр!!!

Есĕ урăх камппанисем айне пулса револђутсиллĕ вилĕмпе вилтĕн!

---

## Пĕлтерӳсем.

**ТӲШЕКСЕМ** срођнă кирлĕ ревиси „комиççисем валђи. Атрĕс: Хамăрйал, Копператтсл урамĕ, Çывăракана.

**ВЫРĂН** шыратăп киле кĕме. Атрĕс: Шупашкар. Атăл хĕрри. 3-мĕш пиђке.

**КĔНЕКЕ** шкапĕ кирлĕ тавлашуллă çĕр пирки пана хутсене усрама. Пӳрте шăнăçакан шкап илсе пырса ап та аппаланăр...

(Иванов).

**ИЛЕТĔП** майра, уђрештенийе çлеме илсен. Алимент илекенни те йураќ. (Ваççилйĕв).

### Шашкă вăййи.



Виççĕ кай та „тамкка" тухса пĕр-пĕр Сашкăран алимент сăптăрса ил.

## Шупашкарстрой, йе...



**Прахут çинђи екскурççийе йертсе пыракан:** Ак ђăвашсен шĕкĕр хули тĕлне çитрĕмĕр. Кирпĕђсем купаланса выртаççĕ унта—ђăвашсем Атăла пĕвеме тытăннă. Вырăсла ăна „Атăлстрой“ теççĕ.

## Ђăрмантаракан йапала.

Уђрештенири слушăшђисен пуххи. Копператтив усси çинђен хăлаçланахăлаçлана токлат тăваť çамрăк токлатђĕк. Токлат вăрăма тăсăлнине сиссе, хыçалтарах тăраканнисем, токлат пĕтмесĕрех, прени пуçласа йанă тата.

— Копператтив ђленне вăйпах çырмалла кашни çынна. Копператтив—сотсиалисăм çулĕ. Кам копператтива çырăнмасť, çав сотсиалисăма йуратмасť, тет пĕрри йункштурм тумтирне тăхăннăскер.

— Есĕ ма кĕместĕнха çак копператтив ђленне? ыйтаççĕ пĕринђен.

— Епĕ хусах çын.

— Ухмах, хусаххине—хусах маррине тиркеççи унта!

— Апла та... авланаймарăм çав.

— Тфу ты! Авланни кирлĕ мар копператтив ђленне кĕме.

— «Кирлĕ мар» теттĕр. Кирлĕ çав. Епĕ слушăшђи вĕт! Авланнă пулсан ђеретре тăма арăма йараттăмђĕ, халĕ никама та йамалли çук.

## Упаран та хăрушă.

1-мĕш сыпăклă шкулсен пиплиоттеккисенђе пĕђĕк аçасене тăнланмалла мар кĕнекесем ђылай.

Ваççа урай хăми çине пуçне çапаçапа пĕтĕм йала илтĕнмелле çухăрнă.

— Тăр! Халех сана матрас вырăсне парса йаратăп, тесе хăратнă Ваççана амăшĕ.

Ваççа ђарăнман.

— Упана тыттарса йаратăп.

Ваççа каллех ђарăнман.

— Вĕлтĕренпе хĕнетĕп. Кăкарса лартам! Çиме памăп!

Ваççа татах та ђарăнман.

— Ăçтаха çав... пĕлтĕр илнĕ кĕнекене вуласа парамха сана.

Ваççа сасартăк сиксе тăнă та, амăшне йăлăнма пуçланă.

— Тархасшăн ан вула. Тупата урăх çухăрмăп, тенĕ.

# Епӗ культтурӑлланма тытӑнни.

— Ку саманара хулара пурӑнакан кашни культтурӑллӑ ҫыннӑн хваттерӗнче телефон пулмалла, терӗ мана пӗррэ хамӑн ҫывӑх йулташ Елексантӑр Иванчӑ.

— Мӗн чухле ӳкӗши ку манерпе культтурӑллӑ ҫын шутне кӗме? — тесе ыйтрӑм епӗ унтан.

— Малтан телефонне лартма вунӑ тенкӗ илеҫҫӗ, унтан уйӑхсерен виҫӗ тенкӗ ҫурӑ тӳлемелле пулатъ, терӗ Елексантӑр Иванчӑ.

Киле таврӑнсан арӑмпа иксӗмӗр шутласа пӑхрӑмӑр та, пӗр ҫулталӑк хушши «культтурӑлланса» пурӑнма 52 тенкӗ кирлӗ иккен.

— Ку ничево: ытла хаклах мар, тет арӑм.

— Хммм...! Ытла пит йӳнех те мар, тетӗп епӗ.

— Культтурӑллӑ ҫын пур йенчен те малта шутланатъ, унӑн хисепӗ те пысӑк. Ӑна аса илсен пирӗн укҫана шелleме те кирлӗ мар. Тепри вӗренме кайса культтурӑлланатъ, пирӗн вӗренме кайма та меслет ҫук. Ав, пӑхха Елексантӑр Кӗркорчӑ арӑмне, мӗнле вӑл халӗ? Пӑртак совпартшколта вӗреннипех самайах культтурӑлланса кайрӗ те, пирӗн пек Коркоп лавккинче шурӑ ҫӑкӑр илесшӗн виҫшер сехет черетре тӑмастъ,—ӑна пырса кӗрсенех прикашчӗксем мӗн кирлӗ ҫавна турттарса парса йараҫҫӗ. Упӑшки ватчи шӑлаварлӑх сукнана та вӑл ҫӑмӑллӑнах илме пултаратъ. Тата вӑл хӑй культтурӑлланнӑ майпа, кӑмиссарсен арӑмӗсемпе те йунашарах урам тӑрӑх кучатъ туса ҫӳрет. Епӗ пур тӑлӑх кӑркка ами пек пӗчченех ҫӳретӗп. Хӑвах пӗлетӗн: кӑмиссарсен арӑмӗсемпе паллашасси ҫӑмӑлах мар, вӗсем пули-пулми ҫынпа хутшӑнмаҫҫӗ. Атӑлӑн леш йенне канма кайсан та хӑйсем пеккисемпе ҫеҫ кампани тӑваҫҫӗ. Мана «культтурӑллантарса» чаплӑ ҫынсен арӑмӗсен хисепне кӳртме санӑн пӗр аллӑ тенкӗшӗн чарӑнса тӑма ҫук, терӗ мана арӑм.

Ҫапла сӳтсе-йавнӑ хыҫҫӑн, хваттере телефон лартмалли лайӑхах паларчӗ.

Вара тепӗр куннех сайавлени ҫырса патӑм. Тепӗр уйӑхран ман сӗтел ҫине телефон аппаратӗ килсе ларчӗ. Вунвиҫҫӗ тенкӗ ҫурӑ укҫа телефонпа пӗр сӑмах калаҫаччenех кӑсйерен тухса ӳкрӗ.

Ну, тытӑнтӑмӑр вара шӑнкӑртаттарма телефонпа!

Тавампа та калаҫрӑмӑр пулӗ пирвайхи кун, телефон шӑнкравӗ сассипе пуҫ ыратакан пулчӗ. Ере, пӗлтересех пулатъскеха пирӗн телефон пуррине!

Тепӗр икӗ кунтан пирӗн телефонӑн шӑнкравӗ сасси таҫта ҫухалчӗ. Телефон пӑсӑлнӑ иккен.

Ун ҫинчен кайса пӗлтертӗм станцийе.

— Пырӑпӑр, терӗҫ маҫтӑрсем.

Чӑпах та пырса тӳрлетрӗҫ тепӗр уйӑхран, иккӗмӗш уйӑхшӑн укҫа тӳлесе хӑварсан.

Татах шанкӑртаттартӑмӑр тепӗр икӗ кун. Икӗ кунтан татах телефон пӑсӑлчӗ. Татах укҫа хыву, татах тӳрлетӳ.

Иаланах ҫапла пулса пычӗ уйӑхран-уйӑха. Пӗрре укҫа вӑхӑтра тӳлеменшӗн штрав та туса пӑхрӗҫ. Кайран-кайран телефоншӑн уйӑхне 5-шер тенкӗ иле пуҫларӗҫ.

Нумай расхутлантӑм ҫӑмӑллӑнах „культтурланма“ шутласа. Нимӗн усси те пулмарӗ. Арӑм та кӑмиссар арӑмӗсемпе паллашаймарӗ; ҫӑкӑр илнӗ ҫӗрте ӗлӗк черетре 3 шер сехет тӑратъчӗ арӑм, халӗ иксӗмӗр те кайса ылмат 3-шер сехет тӑратпӑр; шӑлаварлӑх сукна та аран-аран ҫпеккулянтсенчен туйанкаларӑмӑр; хама та ӗлӗкхи пекех хам малтан ҫӗлӗк илмесен, никам та ҫӗлӗк илсе „сторовӑ“ тӑвакан ҫук. Пӗр ҫулталӑк хушши телефонпа пурӑнса та, пӗр пуслӑх сум та хутшӑнмарӗ. Телефон пӑсӑлнӑ пирки телефонискӑсемпе тӑраничченех харкашни анчах пулчӗ.

Тӗп пултӑр уйӑхра икӗ кун ҫеҫ ӗҫлекен телефон! Ыранах леҫсе паратӑп Санатчӗна.

СЕНӖК.

## Ерехпе кӗрешет.

— Сирӗн йала милитси ерех ширама килети?

— Килет. Кашни ернерех шӑматкун мунча кӗме килет те, мунча хыҫҫӑн ӗҫмелли шырама арӑмӗ кӗлетче ҫӗклесе тухатъ вара.




## Выђăх мурĕсем.

Науккăпа технĕккă малаллах кайса пыраĭ. Пуринђен ытла ҫамрăксем наукка вађђи куллен-кун ҫĕнĕрен йапаласем шухăшласа кăларса ĕҫҫыннисене тыттараҫҫĕ.

Вăта-Упакасси (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) комсомолĕсĕсем уйа улма лартнă та, улмисем ҫине сыснасем вĕреннĕ( ҫавăн пек пĕр ҫул пĕр улма та илеймен). Вара комсомолĕссем сопрадни туса, сыснасемпе мĕнле кĕрешмелли ҫинђен сӳтсе-йаваҫҫĕ. Иулашкинђен вара сыснасене вĕлерекен емелпе (формалин) арпа пăтратса уйа 3—4 ҫĕре вăлашкапа лартаҫҫĕ. Сысна мурĕссм комсомол пилеђĕсемпе ҫӳреҫҫĕ! Сыхланăр сыснасемпе тата ытти выђăх йатне илтнĕ ђĕрĕ ђунсем.

## „Хĕрлĕ кĕтес“ шуралнă.

Туҫи йалĕнђе (Ҫĕрпӳ р.) хĕрлĕ кĕтес ҫухалнă. Хĕрлĕ кĕтес хурал пӳртне хваттер илнĕ пулас, анђах те тĕп сакайĕнђе, те сĕтел айĕнђе—пĕлме май ҫук. Пĕре пĕри пĕр ирхине хурал пӳртĕнђе хĕрлĕ кĕтесе хунар ҫутса шыраса аран-аран шыраса тупнă. Хĕрлĕ кĕтес кăмака тăрне трупа (мăрйе) ҫумне улăхса ларнă. Ҫынсем вырăнне хĕрлĕ кĕтесе таракансем, патмар ерешменсем, хушăран шăни те шăршласа кайаĭ, тет (Кĕнеке-ҫурăкки).

Савăнăр, хĕпĕртенĕр! Хĕрлĕ кĕтес хурал пӳртĕнђех пулнă—трупа ҫумне улăхса ларнăскере турђакапа ҫаклатсан анаĭ вăл.

## Шалăпă кĕнеки.

М.—Т у р а т ҫыраĭ.

«Епĕ шалăпă кĕнеки ҫине ҫырас тесе, Шупашкарти коркоп столовăйĕнђен шалăпă кĕнекине ыйтрăм. Мана саветăшђи: мĕн ҫырмаллине каламасан, епĕр шалăпă кĕнекине никама та памастпăр, терĕ. Епĕ тăнлантарса парсан, саветăшђи кăшкăра пуҫларĕ: мĕн ес, ухмах пуђ! Сире хађ алла кăранташ панă та, темĕскер те ҫырас тесе ҫӳреттĕр, тесе темле сăмахсемпе те вăрҫса пĕтерђĕ тет.

Хайар саветăшђи! Шалăпă кĕнекине киле илсе кайса шкап хыҫне пытарса хăварманши вăл? Унта пулмасан йуратнă арăмăн арђинђе пулĕ.

## Пулăшкома пулăшăр.

Пулăшком пуҫĕ, ђухăнсен тусĕ. Анђах тус кугне йус кĕрет. Мĕншĕн?

Штанашра пулăшком претҫетаттĕлĕ кулак. Штанашри ђухăнсем выҫă ларас патнех ҫитнĕ вăхăтра, вăл тырă илсе лавĕ-лавĕпе сутаĭ. Килте те сутаĭ, Нурăс пасарне кайса та сутаĭ.

Епĕр тата пулăшком претҫетаттăлне сутагпăр. Иўнĕ! 3 кăк сухан парсан, паратпăр.

## Иађĕ пултăр... вара ҫитет.

Кирек камăн та йађĕ пур та, анђах йађĕ пулнипе ҫитмест, кĕлетки те пулма кирлĕ, сăмси те кирлĕ, ҫийĕнђен тата пуҫĕ те кирлĕ.

Тукшикри (Тутаркас р.) комсомол йађейкки ĕҫлемест, тетпĕрђĕ. Ӑҫтан ĕҫлетĕрха вăл. Иађейккăн лайăххăн ответлă ҫыруҫи те ҫук та.—Ме ҫук, пурĕҫке!—Пулмасăр...пур. Анђах Арпус Петĕрне (ответлă ҫыруҫă) комсомола кĕртме райкомол ҫирĕппĕн ҫирĕплетмен те...

Комсомол ҫирĕппĕн кĕрсе ҫитмен ҫынна комсомол йађейккин ответлă ҫыруҫине кĕртнĕ. Пирĕн 99 ҫулхи старăша (парттире тăмансkере) комсомолăн ответлă ҫыруҫине кĕртмĕҫши Тукшиксем? Тукшика куҫма хатĕр вăл кирекхăҫан та.

# „Хĕрарăм мыттарнĕкĕсем",

## йе „йа керой ХХ-ăй век" текен çпетсем.

Ураскилт—Тупташ (ĕлĕкхи Кăрмăш уйесĕнђи ђăваш йалĕсем) лаша улшуç-сем питĕ ђаплă пулкалаканђĕ. Иађĕ те вара кервен, йака пит çăмартиллĕ те— „Мыттарнĕк"... Такам та ытарайас çук, çăмаххийех 100 тенкĕ тăрат̆ çав. Çыннисем çинђен калаçма та кирлĕ мар пек. Анђах „Капкăналла" туртă-наççехха вĕсем.

Çуллен пĕрре кам лашине те пулин кӳлсе тухса урам тăрăх ĕрĕхтерсе ил-месĕр ђăтаймаççĕ. Ианăравлă, шăлтăр-маллă шăвăнакан пурнăçа йуратаççĕ хăйсем, çавăнпа та арттисенђен те ытларах мыскараллă. Мыскарине те мăкăрђђине те тупаççех... Ђунĕсене кантараççех.

Илес çук лашанах витерен туртса ту-хаççĕ. Тата ик-виç ерне ларас пиђке-нех сăрăхтараççĕ. Ыттисене те ăста.

Хăйсен лаши те çук, çапах... йалан çăварни, йалан праçник.

Тепĕр ђухне карта тулли лаша... ыран-пайан вилес лашанах çивĕђлетсе, ăсатса йараççĕ, тепĕр ђухне ђип-ђипер пурнас лашанах, катађђи ђупса ниме йурăхсăра кăлараççĕ.

Маттур вĕт ку халăх, ђăнах, калама та çук... Анђах, хађхи çĕнĕ мыттар-нĕксемпе танлаштарсассăн, Ураскилт мыттарнĕкĕсем кусем патне те пырай-маççĕ.

Куславкка йенђе пит палăрђĕç ку сурт „мыттарнĕксем". Анђах вĕсем ытти йенђе те çук мар вара.

— Ђупса йул, теççĕ, май пур ђухне, çут тĕнђе кур... тутине ил...

Вĕсем авланас умĕн хĕрарăмсене ђуптарса пăхма тытăннă.

Карађри Суслов Кĕçтенкки Минкеш-рен Антонинă йатлă хĕре хăй патне илсе килсе пĕр каç усранă та, ир çинђе пӳрт алăкне уçса, аллисемпе сулсах:

— Хађ Минкешри Иехрим Çирки Павăлĕ патне кай, тесе çул кăтартнă. Камантăпах ăсатат̆.

Тепĕр каçхинех вăл Мĕни-Çырминђен Микиш хĕрне ђĕнсе килнĕ. Кађђа иле-тĕп, тесе илĕртнĕ. Пĕр каç çывăрттар-нă та, ирхине каллех:

— Есĕ аван мар, тесе кăларса йанă.

Татах хăй йурринех йурлатха ку Суслов çпетс. „Мыттарнĕклех" йантă лашасемпе катађђи ђупат̆.

— „Иа керой ХХ-тăй век", йалта йатлă, тесе кĕçенме тытăннă...

Çакнашкалах йалта йатлисем Хутар-Тăван тăрăх та сике-сике тухрĕç. Пĕр мыттарнĕкĕ ернесерен пĕрер хĕрарăма Çĕпĕре илсе кайатăп, тесе йакатат̆. Шупашкисем*) пушанињен хăйпе пĕр-ле ĕçкĕре сĕтĕрсе çӳрет те, кăларса сирпĕнтерет. Пĕр 20 хĕрарăма йакатрĕ ĕнтĕ.

Кашмашра та (Тутаркас р.) Иăван Иакурђă текенни арăмсене улăштар-ма ăсталанса кайнă. Пĕр арăм илет те, мыттарнĕксем çивĕђлетнĕ пек, ăна хĕнеме... Çултаlăкран масар çине ăса-тат̆. 3 арăм ăсатрĕ ĕнтĕ, халĕ тепри-не туптаса çивĕђлетме тытăннă. Ку арăмĕ те утайми пулса ларђĕ. Тепре кӳлсе тухмалли çеç йулнă...

Çапла ĕçлеççĕ ку „керойсем". Иалта йатлă... Мир çине те кăларасах пулат̆ вĕсене, кĕçенсе çӳређђĕр.

Анђах вĕсене пĕр-пĕр „испехтĕр" йертсе çӳрекенни, ревиçи тăваканни тупса парас. Мĕнле тумаллине вĕрент-келетĕр... Ун пеккисем те çук мар пек. Слушăшђисĕм хушшинђе „тир сӳме ăс-та" çпетсем те пур пулас.

Авă Наркомфин (укçа-тенкĕ тĕрĕсле-кен) инçпектăрĕ Краççилнĕккăв пĕр ва-тă карђака уйра хăйĕнне çĕр улми (паранкă) хурал тăма тара тытнă.

Пурăнсан-пурăнсан йалхуçалăх ра-пођђисен сойусĕ ку хуçана токăвăр ту-ма сĕтĕрсе килнĕ. Карђака, 16 тенкĕ панисĕр пуçне, çăмăр айĕнђе çӳреме плашђ, сăранатă туйанса пама тата пӳрт пекки тутарма хушнă. Лешĕ:

— Токăвăр тумастпăр, плашђ па-мастăп... Сыв пулăрах, ыран кирлĕ мар мана вăл, кунђул çитет ĕçлерĕ, тенĕ те тухса утнă хăй çулĕпе.

Çакна „хĕрарăм мыттарнĕкĕсен" ин-спехтĕрĕ туса йарас.

Вара... вара Ураскилт-Тупташ мыт-тарнĕкĕсенђен алă хут ытла малта пы-рĕç ку „çĕнĕ керойсем". ВАÇАНККА.

---

*) Хĕрарăм арђи.

# Тĕлĕк тем те кăтартĕ вăл.

Ту-у-у-у-у! тутарса йанратса йаҫĕ пăрахут Шупашкар тĕлне ҫитсен. Нумай та тăмарĕ—ҫитсе ҫарăнҫĕ пристăнь ҫумне. Пăрахут ҫинҫен хуланалла вĕҫĕлтетсе тухакан ҫынсем хушшинҫе уйрăмах пĕр вăрăм ҫын куҫ тĕлне пулҫĕ. Пиншакпа наккиткă тăхăннăскер, шăлаварне атти ăшне ҫикнĕ, пуҫĕнҫе кăшкарне плиска витнĕ карттус, хăй хура сăнлă, ҫăра хура вăрăм мăйăхлăскер, (уссиллĕскер), ытти ҫынсенҫен ҫур меттăр ҫӳлĕ курăнса пырaт. Картусĕнҫен пăхсассăн тӳрех уҫиттĕл темелле. Ку ҫăнах та уҫиттĕл Никкит Крикорҫă, Иелҫĕк районĕнҫи Ҫирĕклĕ Шăхаҫсем. Вăл Шупашкара пысăк ĕҫпе килнĕ: пенҫҫи шырaт тахăҫантанпа аҫасене вĕрентнĕшĕн. Ун пуҫĕнҫе пысăк шухăш.

— Парĕҫши, памĕҫши? тесе ун пуҫне темиҫе хут шухăш пырса кĕҫĕ пайан. Ҫак шухăшпах вăл уттарҫĕ Ҫутĕҫ Комиссариаҫĕ йеннелле. Иртерех пырса кĕнĕ вăл унта, кирлĕ ҫынсем пырса та ҫитеймен. Те ҫул ҫинҫе ĕшеннипе, те пăрахут ҫинҫе тăранах ҫыврайманнипе, унăн Ҫутĕҫ Комиссариаҫĕн прийомнăйĕнҫе ăйхă килнĕ пек пулса, вăл тĕлĕрсе карĕ те, харлаттарсах ҫывăра пуҫларĕ. Ҫывăрса кайсанах тĕлленмелле тĕлĕк курaт:

«Акă вăл Ҫутĕҫ комиссарĕн кăпинетне кĕҫĕ пек, вара сĕтел хушшинҫе ларакан Ҫутĕҫ комиссарĕ ăна хирĕҫ ура ҫине тăрса алă паҫĕ пек те, ҫапла каларĕ пек:

— Килех, Никкит Крикорҫă! Сана тахăҫантанпах кĕтетпĕр. Есĕ пенҫҫи илме килнĕ пулмалла. Иурaт, ĕҫне ҫасах туса парăпăр. Сан пек сотсиалисăм тăвасшăн нумай тăрăшнă ҫынна пенҫҫи памасан, кама парăпăр тата? Кĕрех йунашар пӳлĕме, унта пенҫҫи паракан комиҫҫи сана тахҫанах кĕтсе ларaт, терĕ пек кăмиссар.

Кĕрет пек Никкит Крикорҫă йунашар пӳлĕме. Унта ҫăнах та ҫынсем ларaҫҫĕ пек. Претҫетаттĕл вырăнĕнҫе Капкăнҫă Йăван Муҫҫи, ҫленсем вырăнĕнҫе капкорсем Шăпҫăкпа Сенĕк, ҫекреттар вырăнĕнҫе капкор Утмăл-Турат ларaҫҫĕ пек, вĕсен умĕнҫе сĕтел ҫинҫе хĕрлĕ тĕслĕ хытă хуплушкаллă кĕнекесем выртаҫҫĕ пек, кĕнеки йаҫĕсене ылтăнпа ҫырнă пек.

— Ку кĕнекесем пенҫҫи парас йĕркене кăгартакан устав кĕнекисем пулмалла, тесе шухăшлaт Никкиттă Крикорҫă. Пăхaт кĕнекисем ҫине, тĕлĕнсех кайaт. Кашни кĕнеки пиҫĕ ҫинҫе «Капкăн» тенĕ сăмах курăнaт.

— Килех, Никкитă Крикорҫă, ларах пирĕн ҫывăха! Пенҫҫи миҫе тенкĕ памалли ҫинҫен сӳтсе-йавиҫҫен малтан ҫак кĕнекесем тăрăх санăн саслукăсене тĕрĕслесе тухмалла пулĕ. Шыраса тупха, Утмăл-Турат, «Капкăнăн» 1926-мĕш ҫулхин 18-мĕш нумĕрне! терĕ пек Йăван Муҫҫи.

Утмăл-Турат кирлĕ нумĕре ҫасах шыраса тупрĕ пек.

— Ну, вула! тет Йăван муҫҫи. Утмăл-Турат тытăнҫĕ пек вулама.

1. Тыха Кĕркури Мĕтри револ̧утсиҫҫен уҫитлĕрә пурăннă, револ̧утси пуҫлансан ҫехсем вăхăтĕнҫе шурă офисер пулса ҫехсемпе пĕрле ĕҫхалăхне хирĕҫ кĕрешнĕ.

2. Ҫехсен кун ҫулĕ пĕтсен Мĕкĕте Хĕрлĕ ҫара кайма ӳркенмерĕ, анҫах фронта кайса ҫапăҫас вырăнне Хусантан хăй килне тĕрлĕ йапаласем шутарса тăҫĕ.

3. Хĕрлĕ ҫартан таврăнсан Тĕмер ҫиркӳне тийаккăна кĕҫĕ тә ҫиркӳри кĕнекесене сутса пĕтерҫĕ. Тимофейпе Кермăн архирейсем хушшинҫе тавлашу тухсан, кăларса сирпĕтнĕ.

4. Ҫак хура ҫăхан Ҫутай Миперĕнҫи Шаккурпа туслă пулнă, унпа пĕрле тĕрмере те ларса тухрĕ.

5. Ваккат ĕҫне тытăнса, «ҫĕнĕ ҫĕр тупса паратăп» тесе ҫухăнсенҫен укҫа пуҫтарса нумай ултлланă.

6. Ултапас шухăшпах Аслăпатĕрйел пуҫнитсине савхоса кĕ...!

— Хоспоти плахослови, турă ҫырлах турă ан пăрах!—тесе кăшкăрса йаҫĕ те, вăранса кайрĕ Никкит Крикорҫă.

— Славă поху, тĕлĕкре пулҫĕ. Латнă тата хам ҫасах вăрантăм. Вăранайман пулсан таҫтан темĕскер тупса вуласа панă пулĕҫĕ ку хăйамат Утмăл-Турат, терĕ вăл савăнса. Унтан ҫăварне карса вăраххăн анасларĕ те, ҫăварĕ ҫине урлă хĕрес хыврĕ. Вара ку ăйхăлатакан вырăнтан тепĕр вырăна куҫса ларҫĕ. Тем мурĕ те курăн тĕлĕкре!

С—к.

## Пушартан сыхланас ĕç.



— Хапха умне ма шыв лартмастăр?
— Катка çукха,—ерех й ӳ ç ĕ т м е кирлĕ.

## Туперккуђоспа кĕрешес кампани.

— Сирĕн йалта туперкуţоспа кĕрешесси?
— Аттепе анне пĕр майах кĕрешеççĕ.

Моççи.

## Пионерсене йертсе пыма лайăх пĕлет.

Пионер вошаттăйĕ хастар ĕçлет, пионерсене ĕçе йертет.

Вĕренекен аţа çырать:

Вăрмар йалĕнţи (çав районах) пионер вошаттăйĕ Михаил Иванов пахţана тымар-çимĕçсем лартма пионерсене шкултан ţыша-ţыша кăларса йанă.

Ţышма пултарать. Çитĕнсессĕн хуликансемпе кĕрешекенсен ушкăнăн претçетаттĕлне кĕрĕ вăл.

## Нăрваш йалĕнђи вĕренекенсен сăнав йăранĕсем çинђе.

Каţţа! Туркурасшĕ!..
Ах, туртур, ку терте!
Ей... Кам унта?
— Меккек! Мек!..
Ха, каţакийех пуţ ку—
Каţţа! Каţţа урама!
— Мек... Мек... Мекекек—
Турнепс ţикерха...
Вăн...н...н вăнлатаççĕ
Пуç тӳпи тăрăнţен.
Айай, Тимахве—Тимахве!
Тухăрха тухăр.—Кравул!
Ах, ку карланкăсене...
Çук, куç кураймасть...
„Меккекексем“ тĕпĕрт те
Тĕпĕрт йăрансем çине...

Çапла çав, пĕр вăйран саланнă вăхăтра шкулти турнепс йăранĕсем çинţе çĕрĕпех турнепс ними кĕрлет. Кил пуç хуçин асламăш карţăкĕ те ниме халăхне ţараймасть. Вĕренекенни мĕнни—унта уйрăм çук. Çăмах пек ţăмăртаннă турнепăсăн калţисене пĕтĕмпех ниме халăхĕ тасатрĕ.

* * *

Ну, кукка, ес шкулкаваш.
Астуха ţĕппӳна!
Кĕркунне пулсан камаха
Турнепс сĕнеттĕн?

К. Руссаков.

## Тилит Микулайĕ.

Аţа (вулать):—Тилит-тилит Микулай
Ик сум вун пус укçи пур.
Унпа кĕлет те илес тет,
Лаша та илес тет,
Пӳрт те илес тет...

Тепри:—Вăл Микулай хăйĕн çметтине тунă ţухне ţ е н т р çине шаннă еппин.

## Икĕ йалсовет претçетаттĕлĕ.

1-мĕш претçетаттĕл.— Есĕ налок çписки таксăнах çырса пĕтернĕ пуţ?
2-мĕш претçетаттĕл.—Çырса пĕтернĕ те, вçаткăсене ĕçсе пĕтерменха.

Караţăм Саңкки.

# Ирхимухмăрпа.



**Ерех ĕçнипе кĕрешекен ушкăн ђленĕ:**—Шăна хуђĕсене ĕнер çакăнта хутăм. Пайан çук. Кам вăрласа кайнăши?

Отв. редактор **А. Золотов.**

Чувашлит. № 717. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“. Нап.1500